27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944 МАЙ 13 ШАМАТКУН 94(6589) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Нимĕç çарĕсене Крымра çапса аркатни

Крымри кампанин итогĕсем

Паян, майăн 12-мĕшĕнче, Крымра пирĕн войскăсем СЕВАСТОПОЛЕ туртса илнĕ вăхăтра çапса салатнă фашистла нимĕç çарĕсен Херсонес сăмсахĕ районĕнчи юлашкийĕсене тасатмалли операцисене вĕçленĕ.

Тăшманăн СЕВАСТОПОЛЬ патĕнчи плацдармне аркатса тăкассишĕн тата Херсонес сăмсахне тасатса çитерессишĕн пынă çапăçусенче пирĕн çарсем майăн 7-мĕшĕпе 12-мĕшĕ хушшинче ПĔТЕРСЕ ТАКНĂ: танксемпе хăй тĕллĕн çӳрекен орудисем — 49, самолетсем—87, тĕрлĕрен орудисем—308, минометсем—331, пулеметсем—620, автомашинăсем—564, тĕрлĕрен складсем—24.

Тăшман, вилнисене кăна шутласан, 20.000 салтакпа офицер ытла çухатнă.

ПИРĔН ВОЙСКĂСЕМ ТЫТСА ИЛНĔ: танксемпе хăй тĕллĕн çӳрекен орудисем—48, самолетсем—49, тĕрлĕрен орудисем—1.228, минометсем—721, пулеметсем—4.859, винтовкăсемпе автоматсем —46.041, автомашинăсем—4.173, лашасем—710, тĕрлĕрен складсем—123, паровозсем—25, вăрçă техники тиенĕ эшелонсем—14, унсăр пуçне тата вăрçă хатĕрĕсем тиенĕ вагонсем—540.

24.361 салтакпа офицера тыткăна илнĕ, вăл шутра 5-мĕш армейски корпусăн командирĕ ЕЕМЭ генерал-лейтенант, 111-мĕш пехотнăй дивизи командирĕ ГРЮНЕР генерал-лейтенант тата темиçе полковник.

Крымри кампани вăхăтĕнче апрелĕн 8-мĕшĕпе майăн 12-мĕшĕ хушшинче ПИРĔН ВОЙСКĂСЕМ ПĔТĔМПЕ ПĔТЕРСЕ ТАКНĂ: танксемпе хăй тĕллĕн çӳрекен орудисем—188, самолетсем—529, тĕрлĕрен орудисем—775, минометсем—946, пулеметсем — 1.882, автомашинăсем—2.227, тĕрлĕрен складсем—39.

Тăшман, вилнисене кăна шутласан, 50.000 салтакĕпе офицерне ытла çухатнă.

ТЫТСА ИЛНĔ: танксемпе хăй тĕллĕн çӳрекен орудисем—111, самолетсем—49, тĕрлĕрен орудисем—2.304, минометсем—1.449, пулеметсем—7.008, винтовкăсемпе автоматсем—84.524, автомашинăсем—4.809, лашасем — 11.684, тĕрлĕрен складсем—188, паровозсем—44, вăрçă техники тиенĕ эшелонсем—14, унсăр пуçне тата тĕрлĕрен вăрçă техники тиенĕ вагонсем — 2.865.

61.587 салтакпа офицера тыткăна илнĕ, вĕсен хушшинче аманнисем те пур.

Çапла вара, Крымри кампани вăхăтĕнче — апрелĕн 8-мĕшĕпе майăн 12-мĕшĕ хушшинче тăшман тĕп вăрçă техники тата çынсем тĕлĕшпе çакăн пек çухатусем тунă: тыткăна парăннисем тата вилнисем—111.587 çын, танксемпе хăй тĕллĕн çӳрекен орудисем—299, самолетсем—573, тĕрлĕ виçеллĕ орудисем — 3.079, автомашинăсем—7.086 тата ытти вăрçă техники те нумай çухатнă.

Кунсăр пуçне пирĕн авиаци тата Хура тинĕс флочĕн карапĕсем апрелĕн 8-мĕшĕпе майăн 12-мĕшĕ хушшинче тăшманăн войскăсемпе вăрçă хатĕрĕсем тиенĕ 69 транспортне, хăвăрт çӳрекен 56 десант баржине, хуралта çӳрекен 2 карапа, 2 канонер лодкине, 3 тральщике, хуралта çӳрекен 27 катера тата ытти 32 суднăна ШЫВА ПУТАРНĂ. Çак вăхăтра пурĕ тĕрлĕ тоннажлă 191 суднăна шыва путарнă.

СОВИНФОРМБЮРО.

ССР Союзĕн Наркомфинĕ пĕлтерни

Кăçалхи майăн 5-мĕшĕнче 25 миллиард тенкĕлĕх кăларнă Государствăн Виççĕмĕш Военнăй Заемне 6 кун хушшинче 28 миллиард та 64 миллион та 170 пин тенкĕлĕх сарнă.

Заема йышăннă суммăран чылаях иртерсе сарнă пирки, СССР Совнаркомĕ кăтартса панипе, СССР Наркомфинĕ заем çыранса илессине 1944 çулхи майăн 12-мĕшĕнчен пуçласа пур çĕрте те чарма хушнă.

Совет халăхĕн чаплă патриотизмĕ

Паян пирĕн хаçатра ССР Союзĕн Финанс Халăх Комиссариачĕ Государствăн Виççĕмĕш Военнăй Заемне çыранса илессине майăн 12-мĕшĕнчен пуçласа пур çĕрте те вĕçлесси çинчен пĕлтерни пичетленсе тухать. Совет правительстви кăçалхи майăн 5-мĕшĕнче халăхран 25 миллиард тенкĕ кивçен пама ыйтрĕ. Совет халăхĕ хăйĕн таса ĕмĕчĕсене пурнăçа кĕртме — нимĕç захватчикĕсене тĕп-йĕрĕпех çĕмĕрсе тăкма ултă кун хушшинчех государствăна 28 миллиард та 64 миллион та 170 пин тенкĕ пачĕ.

Çĕнĕ заема хăвăрттăн та ăнăçлăн вырнаçтарни социализмлă совет çĕршывĕн вăй-хăватне — халăхăн паттăрлăхне, халăх Ленин—Сталин партийĕ, совет правительстви тавра таччăн пĕтĕçсе тăнине, совет халăхĕн иксĕлми туслăхĕн вăйне, вăл хăйĕн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн кĕрешме мĕнпур вăя пама хатĕр пулнине кăтартса пачĕ. Совет халăхĕн паттăрлăхĕ Мускав çине тапăнса килнĕ фашистла вăрă-хурахсене чарса лартма пултарчĕ. Совет халăхĕн паттăрлăхĕ нимĕç захватчикĕсене Сталинград патĕнче çапса аркатрĕ. Совет халăхĕн паттăрлăхĕ ирсĕр тăшмана Атăл шывĕнчен Серет шывĕ патне, Кавказ тăвĕсем патĕнчен Карпат патне çити сирсе ывăтрĕ. Совет халăхĕн паттăрлăхĕ мухтавлă Хĕрлĕ Çар 250 кун хушши хӳтĕленĕ Севастополь хулинчен каппайчăк гитлеровецсене кĕске вăхăтрах кăларса сирпĕтрĕ.

Государствăн Виççĕмĕш Военнăй Заемне сарнă кунсем совет халăхĕн патриотизмĕ çĕнĕрен чаплăн çĕкленнипе паллă пулса тăрассĕ. Совет правительстви çĕнĕ заем кăларасси çинчен пĕлтерсенех совет халăхĕ хăйĕн хăватлă сăмахне каларĕ: йăлтах фронт валли, йăлтах çĕнтерӳ тума! Вăл хăйĕн сăмахне заема хăвăрт вырнаçтарнипе çирĕплетсе пачĕ. Халăх панă укçа — пысăк вăй. Çак вăя ирсĕр фашистсем часах акă хăйсен пуçĕ çийĕнче туйса илĕç.

Хулари тата ялти миллионшар ĕççыннисем, çĕнĕ заема çыранса илсе, хăйсен тăван çĕршыв умĕнчи патриотла тивĕçне пысăн пурнăçа кĕртрĕç. Рабочисемпе служащисем çĕнĕ заема икĕ-виçĕ уйăхри ĕç укçи чухлĕ, колхозниксемпе колхозницăсем нумай пин тенкĕлĕх çыранса илчĕç. Шупашкар районĕнчи «Урожай» колхоз колхозникĕ Егоров, «Чембек» колхоз пчеловочĕ Якимов тата Красноармейски районри «Унга» колхоз колхозникĕ Евдокимов юлташсем çĕнĕ заема 50.000-шер тенкĕлĕх, Елчĕк районĕнчи «Марс» колхоз председателĕ Гаязов юлташ 40.000 тенкĕлĕх, Калинино районĕнчи «Чăваш Коммуни» колхоз председателĕ Капитонов юлташ 35.000 тенкĕлĕх çыранса укçине çийĕнчех хывнă. Çĕнĕ заема пилĕкшер, вуншар, вунпилĕкшер, çирĕмшер пин тенкĕлĕх туянакансем вуншарăн шутланассĕ.

Республикăри ĕççыннисем çĕнĕ заема ултă кун хушшинче 184.204 пин тенкĕлĕх çыранса, заем укçине 95.475 пин тенкĕ пухнă. Малта пыракан Вăрмар, Октябрьски, Красноармейски, Сĕнтĕрвăрри районĕсем ялсенче сарнă заем укçине пухса çитерни те ĕнтĕ.

Итогсем чаплă. Государствăн Виççĕмĕш Военнăй Заемне бюджетпа палăртнинчен ытларах вырнаçтарнă. Анчах та ку лăпланса лармаллине пĕлтермест-ха. Мухтавлă Хĕрлĕ Çара куллен-кун ытларах та ытларах пулăшса тăма пирĕн вăйсене икĕ-виçĕ хут ӳстерсе ĕçлемелле. Хĕрлĕ Çара çĕнтерӳ тума ĕçпе те, укçа-тенкĕпе те пулăшмалла. Паянхи хĕрӳллĕ задача вăл — вырнаçтарнă заем укçине пухас ĕçе хăвăрттăн та ăнăçлăн пухса çитересси пулать.

Анчах та хăшпĕр районсенчи партипе совет тата комсомол организацийĕсем, финанс работникĕсем заем укçине пухас тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлеççĕ-ха. Кувакино, Йĕпреç, Улатăр, Шăмăршă, Хĕрлĕ Чутай, Советски, Пăрачкав районĕсем ялсенче сарнă заем укçин 50 процентне те пухман. Ку ĕнтĕ асăннă районсенчи политикăллă-массăллă ĕçе тивĕçлипе йĕркелеменнине тата çаврăнăçусăр ĕçленине кăтартса парать.

Республикăри чылай предприятисемпе хуçалăх организацийĕсенчи тата учрежденисенчи рабочисемпе служащисем заем укçине срокчен хываççĕ. Çак паха пуçарăва анлăн сармалла. Заем укçине çийĕнчех хывни тăван çĕршыв хăватне вăйлатма, Хĕрлĕ Çара хĕçпăшалсем, вăрçă техники парса тăрассине ӳстерме май парать.

Заем укçине пухас ĕçри сӳрĕклĕхе тĕпренех пĕтермелле. Партипе совет тата комсомол организацийĕсен финанс работникĕсен ĕççыннисем хушшинчи политикăллă-массăллă ĕçе большевикла организацилесе заем укçине çывăх вăхăтрах пухса çитермелле тăвас пулать. Ку ĕçе пĕтĕм ялти актива явăçтармалла.

Комсомолецсемпе çамрăксем! Вăйлă тырпулшăн кĕрешме ял çамрăкĕсен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвне хутшăнăр!

Алтайпа Ставрополь крайĕсенчи, Мускав, Тула, Калинин, тата Ворошиловград облаçĕсенчи чылай машинно-тракторнăй станцисенчи çамрăксем трактор бригадисен, çамрăк трактористсемпе трактористкăсен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвне организацилеме сĕнӳ панă. ВЛКСМ Центральный Комитечĕпе ССР Союзĕн Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ вĕсен сĕнĕвне ырланă. Ăмăрту условийĕсене çирĕплетнĕ.

Ăмăртăва МТС-сенчи çамрăксен трактор бригадисем, çамрăк трактористсемпе трактористкăсем пурте хутшăнма пултарассĕ. Сурхи ĕçсен планне, çĕртме тумалли, тырпулсене пухса кĕртмелли, кĕрхи тырăсем акмалли, кĕрхи çĕртме тумалли плансене вăхăтра пурнăçланă, кашни тракторпа планпа пăхнинчен ытларах ĕç тунă тата ĕçе пахалăхлă тунă çамрăксен трактор бригадисене Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура мала тухнă тесе шутлассĕ. Бригадăсем умне машинăсене техника енчен çирĕппĕн пăхса тăрас, хăйсен тракторĕсене тата кăкарса ĕçлемелли инвентаре кăтартуллă тытас; горючи перекетлес задача лартнă.

Ăмăртура мала тухса пĕрремĕш вырăн йышăннă 5 трактор бригади валли ВЛКСМ Центральный Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавĕсене тунă, вĕсемпе пĕрле 15-шер пин тенкĕ укçан преми парассĕ.

Иккĕмĕш вырăн йышăннă 20 бригадăна укçан преми — 10-шар пин тенкĕ парассĕ.

Виççĕмĕш вырăн йышăннă 30 бригадăна укçан преми — 5-шер пин тенкĕ парассĕ.

Ăмăртура мала тухнă трактор бригадисен бригадирĕсене ята çырнă сехетсем парса премилессĕ. Чаплă трактористсене хаклă парнесем парассĕ.

Социализмлă ăмăртăва лайăх организациленине пула районри машинно-тракторнăй станцинчи çамрăксен мĕнпур трактор бригадисем тракторпа тумалли ĕçсен планне пурнăçа кĕртнĕ пулсан, çав пуçламăш организацисене, комсомол райкомĕсене ВЛКСМ Центральный Комитечĕн Хисеплĕ грамотипе тата хаклă парнесемпе наградăлассĕ.

Çамрăксен трактор бригадисен социализмлă ăмăртăвĕн итогĕсене çак вăхăтсенче тăвассĕ: районсем тăрăх — кашни 10 кун иртнĕ хыççăн пĕр хутчен, облаçсем тăрăх — кашни уйăхра пĕр хутчен, Пĕтĕм Союзĕпе — çулталăкра икĕ хутчен.

ВЛКСМ Центральный Комитечĕпе ССР Союзĕн Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ комсомол райкомĕсене, обкомĕсене, крайкомĕсене тата союзлă республикăсенчи Центральный Комитечĕсене, облаçри тата крайри çĕрĕç пайĕсене, республикăсенчи Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕсене ăмăрту условийĕсем çинчен анлăн ăнлантарса пама, ăмăртăва çамрăксен мĕнпур трактор бригадисене, МТС-сенчи мĕнпур çамрăк трактористсемпе трактористкăсене явăçтарма хушнă.

ВЛКСМ Центральный Комитечĕпе ССР Союзĕн Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ çамрăксен трактор бригадисене, трактористсемпе трактористкăсене Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнма, колхоз уйхирĕсенче стахановла ĕçлеме, ăмăртура мала тухассишĕн кĕрешме чĕннĕ.

* * *

Новосибирск, Воронеж тата Рязань облаçĕсенчи, Азербайджан ССР-ĕнчи, Чăваш АССР-ĕнчи чылай колхозсенчи çамрăксем сĕннине ырласа, ВЛКСМ Центральный Комитечĕпе ССР Союзĕн Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ çавăн пекех колхозсенчи вăйлă тырпул туса илес тĕлĕшпе ĕçлекен çамрăксен звенисен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвне организацилеме йышăннă. Ăмăрту условийĕсене çирĕплетнĕ.

Суракине иртерне вăхăтра, калчасене пăхса çитĕнтерне тата тырпулсене уйхиртен пухса кĕнĕ вăхăтра агротехникăн мĕнпур мероприятийĕсене пĕтĕмĕшлех пурнăçа кĕртнĕ, звено çумне çирĕплетнĕ пĕтĕм çĕрлаптăкĕ çинчен пуринчен те ытларах тырпул туса илнĕ çамрăксен звенисене ăмăртура мала тухнă тесе шутлассĕ. Пĕрчĕллĕ тырăсен, çу тумалли тата пăрça йышши культурăсен, çĕрмамăкĕн, сахăр кăшманĕн, йĕтĕнĕн, кок-сагызăн, çĕрулмин, пахча-çимĕçĕн чи вăйлă тухăçне туса илнĕ тата звенона çирĕплетсе панă ытти культурăсен тухăçлăхĕн планне пурнăçланă çамрăксен звенисем валли ВЛКСМ Центральный Комитечĕн куçса çӳрекен 10 Хĕрлĕ Ялавне тунă тата çакăн пек премисем палăртнă:

пĕрремĕш премисем — 10, кашниех 10-шар пин тенкĕлĕх,

иккĕмĕш премисем — 30, кашниех 7-шер пин тенкĕлĕх,

виççĕмĕш премисем — 40, кашниех 5-шер пин тенкĕлĕх.

Ăмăртура мала тухнă çамрăксен звенисен руководителĕсене ята çырнă сехетсем парса наградăлассĕ.

Çирĕплетнĕ участок çинчен плана çирĕплетсе панă тухăçăн планне 150 процентран ытларах ӳстернĕ звеносене ССР Союзĕн Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн Мухтав грамотипе наградăлассĕ, уйрăмах палăрнă колхоз çамрăкĕсене — ССР Союзĕн Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн «Социализмлă ялхуçалăхĕн отличникĕ» ятлă значекĕпе наградăлассĕ. Çамрăксен звенисене лайăх ертсе пынă колхозсенчи уйĕç бригадисен бригадирĕсене, çавна пула звено социализмлă ăмăртура мала тухнă пулсан, хаклă парнесем парассĕ.

ВЛКСМ Центральный Комитечĕпе ССР Союзĕн Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ комсомол райкомĕсене, обкомĕсене, крайкомĕсемпе союзлă республикăсенчи Центральный Комитечĕсене, районсенчи, облаçсенчи, крайсенчи çĕрĕç пайĕсене, союзлă тата автономлă республикăсенчи Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕсене социализмлă ăмăртăва куллен ертсе пыма, пичетпе радио тата агитаторсен калаçăвĕсем урлă малта пыракан звеносен, вăйлă тырпул мастерĕсен ĕç опытне анлăн сутатса тăма хушнă.

ВЛКСМ Центральный Комитечĕпе ССР Союзĕн Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ çамрăк колхозниксене çамрăксен звенисен социализмлă ăмăртăвне активлăн хутшăнма, вăйлă тырпул туса илме, фронтпа çĕршыв валли тырпул, çĕрулми, пахча-çимĕç тата промышленность валли чĕр-тавар ытларах туса пама чĕннĕ.

Машинăсемпе тракторсен паркĕпе туллин те пĕр чарăнмасăр усă курассишĕн Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва организацилер!

Уйхирсене лайăх сухапаса çемçетер!

Мускав облаçĕнчи Пĕрремĕш Михневски МТС-ĕн работникĕсем Совет Союзĕнчи мĕнпур МТС-сенчи трактористсемпе трактористкăсене, комбайнерсемпе комбайнеркăсене, бригадирсемпе механиксене, пĕтĕм работниксене

ЧĔНСЕ КАЛАНИ

Хаклă юлташсем!

Паттăр Хĕрлĕ Çар хамăрăн Тăван çĕршывăн çĕрĕсене фашистла нимĕç вăрă-хурахĕсенчен тасатса пырать. Тăшмана пуçĕпех çапса аркатас сехет çывхарса килет. Анчах çĕнтерӳ хăй тĕллĕн пулмасть, ăна кĕрешсе илмелле, — тесе вĕрентет пире Сталин юлташ.

Фронтпа çĕршыва — апат-çимĕç, промышленноçа чĕртавар татах та ытларах парас тесе, хамăрăн совет çĕрне пĕтĕмĕшпех тасатса çитерме, фашистла тискер кайăка хăйĕн шăтăкĕнчех çапса вĕлерме Хĕрлĕ Çара пулăшас тесе, колхоз хресченĕсем пĕтĕм вăя хурса ĕçлеççĕ. Колхоз хресченĕсем вăрçă çулĕсенче чылай пысăк çитĕнӳсем турĕç, Сталин юлташ вĕсен ĕçне пысăка хурса хакларĕ.

МТС-сен работникĕсем государство пире шанса панă машинăсемпе лайăхрах усă курнă пулсан, çав çитĕнӳсем татах та пысăкрах пулнă пулĕччĕç. ССР Союзĕн Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ 1944 çулхи ялхуçалăх ĕçĕсен планĕ çинчен йышăннă постановленире МТС-сем 1943 çулта çителĕксĕр ĕçленине палăртрĕç. МТС-сем çителĕксĕр ĕçленине пула тракторпа тумалли ĕçсен планне пурнăçа кĕртеймен, механизаци ĕçĕн шайне чакарнă, уйхир ĕçĕсене кая хăварнă, çĕртме тумалли тата вĕсене пăхса тăмалли, кĕрхи çĕртме тумалли тата тырпулсене пăхса çитĕнтермелли плана пурнăçа кĕртмен. Правительствăпа парти МТС-сене ялхуçалăх ĕçĕсен пахалăхне тĕпренех лайăхлатма, машинăсемпе тракторсен паркĕпе лайăхрах усă курма хушрĕç.

Мускав облаçĕ МТС-сен лайăх ĕçĕшĕн Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне илме тивĕçлĕ пулчĕ. Пирĕн МТС облаçра пĕрремĕш вырăн йышăнчĕ. Трактор ĕçĕсен планне 156 процент тултарнă, трактор ĕçĕсен хăйне ларакан хакне кашни гектартан 9-шар тенкĕ чухлĕ йӳнетнĕ. Пирĕн МТС ĕçлесе паракан колхозсем гектартан вăтам шутпа 13-шер центнер тырпул илчĕç, натуроплата тӳлемелли задание 123,7 процент тултарчĕç. Пирĕнчи лайăх трактористсем Жихаревпа Селезнев юлташсем иртнĕ сезонра кашниех икĕ норма çуршар тултарчĕç.

Анчах эпир хамăр алăри мĕнпур майсемпе пĕтĕмĕшпех усă курман-ха.

Горький облаçĕнчи Каменка МТС-ĕн коллективĕ чĕнсе каланипе Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнса, пирĕн МТС коллективĕ мĕнпур машинăсене февралĕн 1-мĕшĕ тĕлнех, правительство кăтартнă срокран 2,5 уйăх малтан, юсаса çитерчĕ. Эпир тракторсемпе ялхуçалăх машинисене уйхир ĕçĕсем валли мĕнле хатĕрлесе çитернине пăхса тухрăмăр, сунтармаллипе сĕрмелли материалсене бригадăсене турттарса хурса, вĕсене ятарласа тунă çуртсенче тĕплĕн пăхса усратпăр. Газонераторлă тракторсем валли пĕтĕм сезонлăх топливо хатĕрлесе хунă.

Çураки ăнăçлăхĕ, тырпул тухăçлăхĕ тракторсем лайăх ĕçленинчен чылай килет. Çакна шута илсе, эпир сире 1944 çулта тракторсемпе ялхуçалăх машинисене кăтартуллăн ĕçлеттерессишĕн Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва организацилеме чĕнетпĕр.

Хамăр çине эпир çакăн пек обязательствăсем илетпĕр:

1. Сезонра кашни 15 лаша вăйлĕ тракторпа 600 гектартан кая мар сухаламалла—плана 150 процент тултармалла.

Мĕнпур ĕçсене агротехника тĕлĕшпе пысăк пахалăхлă туса ирттермелле тата МТС ĕçлесе паракан колхозсене кăçалхи çул кашни гектартан 100-шер пăтран кая мар тĕштырă, 900-шер пăт çĕрулми туса илме пулăшмалла.

2. Трактор ĕçĕсен хăйне ларакан хакне 25 процент чухлĕ йӳнетмелле. Çав шутпа тракторсен ĕçне тĕрĕс йĕркелесе, вĕсене пĕтĕм хăвачĕпе ĕçлеттермелле, тракторсемпе вĕсем çумне кăкарса ĕçлемелли машинăсене техника тĕлĕшĕнчен пăхса тăрассине кăтартуллăн организацилемелле, хамăрăн вăйсемпе бригадăсем валли тракторсене юсамалли инструментсен комплекчĕсене туса хатĕрлемелле; кашни тракториста хăй валли уйрăм инструментсем туса памалла. Сунтармалли япаласене 15 процент перекетлесе хăвармалла.

3. Тырпула пухса кĕртмелли машинăсене — комбайнсемпе молотилкăсене — майăн 20-мĕшĕ тĕлне юсаса çитермелле.

4. Колхозсене тырпула вăхăтра вырса, çапса парса, вĕсене государство умĕнчи обязательствăсене пур енĕпе те срокчен тултарма пулăшмалла. Натуроплата тӳлемелли плана срокчен — октябрĕн 10-мĕшĕ тĕлне 125 процент чухлĕ тултармалла.

5. Трактористсен, комбайнерсен, штурвальнăйсемпе прицепщиксен техникăллă пĕлӳлĕхне ӳстерес шутпа уйхир ĕçĕсем вăхăтĕнче трактор бригадисенчи механиксемпе бригадирсем ертсе пынипе техникăллă вĕренĕве организацилемелле. Кăçалхи сезонра мĕнпур прицепщиксене тракторпа ĕçлеме вĕрентсе çитермелле.

6. Мастерскойсен ĕçне лайăх организацилесе, çуллахи уйхир ĕçĕсенче тракторсене лайăх пăхса пынипе пĕрлех, кĕркуннепе хĕллехи вăхăтра юсама запаслă пайсем 16.000 тенкĕлĕх çĕнĕрен туса тата киввисене юсаса çĕнетсе хатĕрлемелле, ку енĕпе плана 150 процент тултармалла.

Юлташсем — трактористсемпе трактористкăсем, механиксем, МТС-сенчи мĕнпур работниксем! Государствăпа колхозсем пирĕн çине пысăк шанчăк хурассĕ. Кăçалхи çул пирĕн ĕçе эпир мĕн чухлĕ сухаласа акни тăрăх кăна мар, хамăр ĕçленĕ уйхирĕн мĕн чухлĕ тырпул туса илни тăрăх та виçсе хакласçĕ.

Суракине хăвăрт та лайăх ирттерер!

Ударлăн ĕçлесе машинăсемпе тракторсен мĕнпур паркĕпе уйхир ĕçĕсенче туллин те пĕр чарăнмасăр усă курмалла тăвар!

Уйхирсене лайăх ĕçлесе çемçетер!

Сунтармалли тата сĕрмелли материалсен кашни тумламне перекетлĕн расходлар!

Суракине ăнăçлăн туса ирттерессишĕн, тракторсене тухăçлăн ĕçлеттерессишĕн, колхозсенче вăйлă тырпул туса илессипшĕн машинно-тракторнăй станцисен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвне хутшăнăр!

Сывă пултăр пирĕн çĕнтерӳллĕ Хĕрлĕ Çар!

Сывă пултăр пирĕн аслă Тăван çĕршыв!

Сывă пултăр пирĕн гениллĕ полководец Совет Союзĕн Маршалĕ Сталин юлташ!

Нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

Чĕнсе калани çине çаксем алă пуснă:

МТС директорĕ А. ВОЛЧАНИН.
Пуçламĕш парторганизаци секретарĕ М. ТЮЛЕНЕВ.
Рабочком председателĕ П. НИКОЛЕНКО.
Комсомол организацин секретарĕ З. ОБНОСОВА.
Старши механик П. СТАШАНИН.
Старши агроном П. КАЛИНИН.
Трактор бригадисен бригадирĕсем: А. МОДИН, М. КУТУЗОВ, И. МОИСЕЕВ.
Пиншер гектар сухаланă трактористсем: Г. ЖИХАРЕВ, С. СЕЛЕЗНЕВ.
Старши бухгалтер Н. АСТАХОВА.
Нефтебаза заведующийĕ И. ЦАРИКОВ.

Тракторпа куллен 12,8 гектар сухалаççĕ

ССР Союзĕн Çĕрĕç Халăх Комиссарĕн Заместителĕ Бенедиктов юлташ Федор Сальцев ертсе пыракан тракторсен бригадине çураки кунĕсенче лайăх ĕçленĕшĕн тав тунă. Чи лайăх трактористсене хаклă парнесем тата «Отличник социалистического сельского хозяйства» значекĕ парса наградăланă.

Иртнĕ çул Сальцев юлташ ертсе пыракан çамрăксен трактор бригади Чкалов облаçĕнчи ăмăртура пĕрремĕш вырăн йышăннă. Çемçе сухана куçарса шутласан, вăл кашни трактор пуçне 845 гектар сухаланă, çав вăхăтрах 3.362 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

Юр ирĕлсе пĕтсе тăпра типсенех, бригада уя тухнă. СТЗ тракторпа куллен кашни трактор пуçне 12,8 гектар сухаласа, бригада çураки вăхăтĕнче ĕçлемелли 10 кунлăх задание ытлашшипех тултарнă. Бригадăри лайăх трактористсем хăйсен ака вăхăтĕнчи планне 6—8 ĕç кунĕнчех тултарнă.

16 çулхи Федя Лошков 8 кун хушшинче 75 гектар сухаланă, çав вăхăтрах 100 килограмм горючи перекетленĕ; Маруся Абалихина 73 гектар сухаланă, 180 килограмм горючи перекетленĕ.

— Çавăн пек çитĕнӳсем тума пире тракторсене техника енчен пăхмалли графика тĕрĕс пурнăçласа пыни тата тракторсен вăйне ӳстермелли хăшпĕр ĕçсене туни пулăшрĕ,—тет Сальцев юлташ. — Тракторсен вăйне ӳстерни плугсем çумне тăпрер корпус хушма май пачĕ. Тăпрана сухаланă чухне эпир агрегатпа ĕçleme тăрăшатпăр. Ака сухине эпир çапла тăватпăр: трактор çумне 4 корпуслă плуг, 2 звенолла сӳре тата лашапа ĕçлемелли 11 ретлĕ сеялка кăкаратпăр. Çакăн пек агрегатпа ĕçленĕ чухне эпир 18—20 сантиметр тарăнăш сухаласа, икĕ хут сӳресе тата акса пыратпăр. (ТАСС).

Совет Союзĕпе Костарика республики хушшинче дипломатиллĕ тата консуллă çыхăнусем пуçласа яни

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕпе Костарика республики хушшинче дипломатиллĕ тата консуллă çыхăнусем пуçласа яма Костарика республики сĕннине Совет правительстви йышăннă.

Çав икĕ правительство çак ыйту тĕлĕшпе калаçса татăлнине Совет Союзĕн Мексикăри посолĕ К. А. Уманский юлташ тата Костарика республикин Мексикăри посолĕ К. Х. Муньос господин майăн 8-мĕшĕнче пĕр-пĕрин патне нотăсем ярса çирĕплетнĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

МАЙĂН 11-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Майăн 11-мĕшĕнче Днестр шывĕн сылтăм енчи плацдарма, ТИРАСПОЛЬ хулинчен сурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем тăшман пехотипе танкĕсен пысăк вăйĕсен атакисене сирпе-сирпе янă, тăшман çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен пысăк çухатусем тунă.

Фронтăн ытти участокĕсенче палăрмăш улшăнусем пулман.

Майăн 10-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕн пур фронтсенче нимĕçсен 74 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллерипе тăшманăн 45 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Станислав хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн саперсем [illegible] тăшман тылне кайса минăсем лартнă та нимĕçсен 6 танкне тата тĕл тĕлĕн сӳрекен 2 тупăнне сирпĕнтерсе янă. Тепĕр участокра разведчиксем, Парафин юлташ командир пулса ертсе пынипе, çын асăрхаман хӳшăра нимĕçсен [illegible] вырăна кĕрсе кайнă. Автоматсемпе персе тата гранатăсем вăркăнтарса, пирĕн боецсем 30 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă, вара тăшман оборони çинчен хаклă сведенисем пухса, хăйсен чаçне таврăннă.

* * *

Тирасполь хулинчен сурçĕр-хĕвеланăçнерехре нимĕçсем пысăк вăйсемпе, артиллерипе персе хатĕрленĕ хыççăн, пирĕн çарсене Днестр шывĕн сылтăм енчи позицисенче атакăланă. Нимĕçсен совет çарĕсене хирĕç танкне [illegible] çапăнса хăтланнă, совет çарĕсене Днестр шывĕн сулахай енне хăваласа ярасшăн пулнă. Хаяр çапăçусем пуçланса кайнă. Нимĕç танкĕсемпе пехоти хумсем пек тапăнса пынă. Совет артиллеристĕсем миномётчиксемпе тĕл персе гитлеровецсене речĕсене çаратса тăкнă. Пирĕн гварди чаçĕсем тăшман атакисене сирпе сирпе янă. Нимĕçсен 60 танкне персе çĕмĕрсе е çунтарса янă. Кун каçиччен нимĕçсен пехотине пĕр полкă çити пĕтерсе тăкнă.

Совет летчикĕсем сывлăшри çапăçусенче тăшманăн 8 самолетне персе ӳкернĕ. Унсăр пуçне зенитнăй артиллери нимĕçсен 15 самолетне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Пирĕн торпедăпа пăрахакан самолет Норвеги сурçĕр çыранĕсем патĕнче нимĕçсен 7.000 тонна таякан транспортне курнă та çавăнтах атакăланă. Торпеда тӳрех пырса тивнипе судно çинче взрыв пулнă, пушар тухнă.

Майăн 9-мĕшĕнче флот авиацийĕ тăшман портне ăнăçлăн тапăннă. Бомбăсем тӳрех пырса тивнипе портри 4.000 тонна таякан транспорт, пĕр мотобот тата 5 пĕчĕк судно шыва путнă, горючи тултарса лартнă бензин бакĕ сирпĕнсе кайнă.

* * *

Майăн 10-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн авиаци тăшман аэродромĕсене пыра-пыра çапнă. Бомбăсем пăрахса, çĕр çинче нимĕçсен 8 самолетĕнчен кая мар пĕтерсе тăкнă, ангарпа мастерскойсене сирпĕнтерсе янă.

* * *

Молдаван ССР-ĕн кăнтăрти районĕсенче кĕрешекен партизансен отрячĕ çĕрле пĕр ялта нимĕç чаçĕн штабне аркатса тăкнă. Нимĕçсен 22 офицерне вĕлернĕ. Партизансен тепĕр отрячĕ 4 сехет хушши тăшман пехотин батальонĕпе çапăçнă. Нимĕçсем партизансенчен чылай йышлăрах пулнă пулин те, вĕсен каялла чакмалла пулнă. Çапăçу хирĕнче тăшман салтакĕсемпе офицерĕсен виллисем нумай выртса юлнă.

* * *

Нимĕçсен 111-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 117-мĕш полкăн 2-мĕш батальонĕн [illegible] командирĕ капитан Вольф Дитрих Линденау çапла каласа пачĕ: «Вырăссем Николаев патĕнче 111-мĕш пехотнăй дивизие [illegible] дивизи пĕтĕм вăрçă техники, обозĕсем тата 4.000 салтакне пĕтерчĕ. Часах эпир, [illegible] Крыма, Джанкой районне куçарчĕç. [illegible] Çул çинче офицерсем хушса пычĕç. [illegible] Крымри нимĕçсен 17-мĕш армийĕн штабĕнчи аслă офицерсем [illegible] Армии командующийĕ инженери çарĕсен генералĕ Йенеке Крымри укрепленисене никам та çĕмĕреймест тесе шутлатчĕ. Унтан та ытларах, нимĕçсен командованийĕ [illegible] наступлени тума шутланă. Перекопра, Сиваш районĕнче [illegible] оборона [illegible] Пĕр [illegible] кăна парăнчĕç.

* * *

Винница облаçĕнчи Метлинец ял çыннисем фашистла нимĕç ирсĕрĕсем тунă тискер ĕçсем çинчен акт çырнă. Актра çапла калана: «Нимĕç оккупанчĕсем пирĕн ялта 2 çул ытла хуçа пулса пурăнчĕç. Вĕсем мирлĕ халăхран питех те мăшкăлларĕç, çаратрĕç, пĕр айăпсăр çынсене вĕлерсе пурăнчĕç. Çак участокри нимĕç коменданчĕ Штрун стариксене, хĕрарăмсене тата пĕчĕк ачасене те хĕрех асаплантарнă. Фашистла нимĕç захватчикĕсем пирĕн ялтан 270 çынна Германи каторгине хăваласа кайрĕç. Çак çулхи январь уйăхĕнче нимĕçсем пирĕн яла çунтарса ячĕç. Пушарта 470 пӳрт тата мĕнпур хуралтăсем çунса кайрĕç. Вут тĕртес умĕн гитлеровецсем пирĕн пĕтĕм пурлăха çаратса тухрĕç.

Пире нимĕçсен пусмăрлăхĕнчен, ылханлă фашистсен ирсĕрĕсенчен ирĕке кăларнă тăван Хĕрлĕ Çара эпир чунтан-вартан тав тăватпăр».

Акт çине Метлинец ялĕнчи çак çынсем алă пуснă: В. Майский, К. Семенчук, Р. Гончарук, Т. Докийчук, В. Семенчук.

Уяр çанталăкăн кашни сехечĕпе туллин усă курар. Çураки хăвăртлăхĕпе пахалăхне ӳстерер!

1944 ÇУЛТИ, МАЙĂН 10-МĔШĔ ТĔЛНЕ РЕСПУБЛИКĂРИ КОЛХОЗСЕНЧЕ ÇУРАКИ ĔÇĔСЕМ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТАКАН СВОДКА

Районсем:	Çуртырисем акнă, иртнĕ çулхи курăксемсĕр пуçне (процентпа)	Пĕрчĕллĕ тата пăрçа йышши тырăсем акнă (процентпа)	Пĕр çул ӳсекен курăксем акнă (процентпа)	Нумай çул хушши ӳсекен курăксем акнă (процентпа)
Калинино	45,0	57,3	29,7	40,2
Чурачăк	43,4	50,9	22,5	28,2
Красноармейски	40,8	54,1	—	78,1
Елчĕк	37,9	44,4	15,8	23,7
Çĕрпӳ	37,3	44,1	63,3	33,0
Шăхасан	36,5	43,0	11,2	27,9
Муркаш	31,7	29,1	5,4	46,2
Вăрнар	29,1	39,0	15,3	35,4
Чкаловски	28,8	35,0	5,2	21,1
Канаш	28,1	36,3	7,1	28,7
Вăрмар	27,9	32,3	32,3	60,3
Сĕнтĕрвăрри	26,0	32,4	48,3	49,8
Сĕнтĕр	25,8	29,0	46,8	51,1
Комсомольски	25,5	29,6	13,3	15,1
Октябрьски	24,5	31,7	38,5	32,0
Куславкка	24,1	30,0	—	35,8
Шупашкар	24,0	26,8	5,5	48,1
Етĕрне	23,7	30,5	35,6	28,8
Тăвай	23,7	29,5	—	52,2
Пăрачкав	23,0	27,4	—	3,6
Элĕк	22,9	29,0	7,8	44,1
Ишлей	22,1	24,4	34,1	46,4
Шăмăршă	21,8	25,8	—	23,3
Советски	20,7	16,6	25,6	40,0
Первомайски	17,4	19,1	1,8	9,7
Хĕрлĕ Чутай	17,3	23,0	3,7	39,1
Йĕпреç	16,7	21,1	10,4	25,0
Çĕмĕрле	12,6	17,7	11,7	15,5
Улатăр	12,4	14,9	5,0	7,8
Кувакино	10,7	12,9	10,5	2,2
Шупашкар хули	32,8	49,2	80,0	8,0
Пĕтĕмпе	26,9	32,6	18,0	34,8
Майăн 5-мĕшĕ тĕлне пулнă:	16,3	17,8	9,1	32,2

1944 ÇУЛТИ МАЙĂН 10-МĔШĔ ТĔЛНЕ РЕСПУБЛИКĂРИ МТС-сем МĔНЛЕ ĔÇЛЕНИНЕ КĂТАРТАКАН СВОДКА

МТС-сем	Пурĕ çуркуннехи ĕçсене тунă, çемçе суха çине куçарса (процентпа).
Шăхасан	59,0
Красноармейски	52,6
Çĕрпӳ	44,6
Елчĕк	43,2
Чкаловски	41,7
Комсомольски	41,1
Сĕнтĕр	37,8
Ишлей	34,5
Йĕпреç	33,7
Тăвай	32,7
Сĕнтĕрвăрри	31,8
Первомайски	30,9
Калинино	26,8
Куславкка	26,2
Вăрнар	24,7
Элĕк	24,5
Çĕмĕрле	23,8
Вăрмар	23,4
Хĕрлĕ Чутай	20,2
Канаш	19,6
Етĕрне	19,6
Сурмайдан	18,0
Кожевенски	17,2
Кувакино	14,6
Шупашкар	15,8
Шăмăршă	13,1
Улатăр	13,3
Пăрачкав	11,3
Октябрьски	10,0
Пĕтĕмпе	27,3

10 колхоз пĕрчĕллĕ тырăсене акса пĕтерне

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, майăн 12-мĕшĕ. (**Телефонпа**). Районĕпе çураки планне майăн 10-мĕшĕ тĕлне 54 процент пурнăçланă. Колхозсен уйхирĕсенче МТС тракторĕсем ăнăçлă ĕçлеççĕ. Паянхи кун тĕлне вĕсем 2.000 гектара яхăн сухаланă.

Майăн 10-мĕшĕ тĕлне Молотов, Калинин ячĕсемпе тăракан, «Малалла», «Жнейка», «Красноармеец», «Чувашия» колхозсем—пурĕ 10 колхоз пĕрчĕллĕ тата пăрçа йышши тырăсене акса пĕтернĕ.

Калинин ячĕпе тăракан колхозра Уйрăмăнах Антоновпа Данилов сухаçăсем ăнăçлă ĕçленĕ, вĕсем кашни кунах нормăна вăтамран 125 процент тултарса пынă. Кунта звеносемпе тата кашни колхозник уйрăм ĕçленĕ.

Халĕ çĕрулми лартмалли вырăнсене тата ферма çумĕнчи участока сухалаççĕ.

Фронтовик çемьисене пулăшма планран иртте[illegible] пĕр гектар тырă акнă.

И. ХАТАЕВСКИЙ.

Малта пыракансенчен пример илмелле

КАЛИНИНО. (**«Чăваш Коммуни» корр.**). Услапари «Броневик» колхоз тĕштырăсене майăн 10-мĕшĕнче акса пĕтерчĕ. Малта пыракан Юркинпа Сорокин юлташсен бригадисем ака ĕçне майăн 4-мĕшĕнчех вĕçлерĕç.

«Большевик» тата «Пучах» колхозсем çураки планне 80—90 процент пурнăçланă. Тепĕр кунтан вĕсем те ака ĕçне вĕçлеççĕ.

Сталин юлташăн май уявĕ ячĕпе кăларнă приказĕпе хавхаланса, колхозниксемпе колхозницăсем çине тăрса ĕçлеççĕ. Уйхир ĕçĕнчи стахановецсен хисепĕ куллен-кун ӳсет. Çавалкасри «Çутталла» колхозра, акă, суха тăвакан Федосия Макшина, Елена Петрова, Александр Чумаков, Федосия Захарова кулленхи заданние 130 процент тултараççĕ. Вĕсем уя ирех тухса сĕм тĕттĕм пуличчен ĕçлеççĕ, ĕç кунĕпе туллин усă кураççĕ. Çавна пула ĕнтĕ колхоз кăçал ака ĕçне организованнăй туса пырать.

«Броневик» колхозри сухаçăсем В. Соснова, А. Петрова, А. Васильева, акакан Т. Петрова, сӳресĕсем В. Сорокин, О. Капитонова, Е. Сергеева нормăна 130—150 процент тултараççĕ.

Анчах уйрăм колхозсем ака ĕçне вăраха хăварчĕç. «Побела» колхозăн 202 гектар акмалла. Паянхи кун тĕлне вăл пĕтĕмпе те плана 10 процент çеç тултарнă. Мĕншĕн тесен кунта ĕç кунĕпе, çавăн пекех туртăм вăйĕпе те туллин усă курмаççĕ. Колхозниксем ĕçе ирхине 7—8 сехетре çеç тухаççĕ, каç пуличченех кĕреççĕ.

— Пирĕн лашасем начар, çавăнпа юлса пыратпăр, — теме пăхать колхоз председателĕ Скворцов юлташ. Çав вăхăтрах вăл колхоз лашисене уйра çитерсе кантарассине организацилемен.

Кадеркинăри «Молния» колхоз та япăх ĕçлет. Кунта та туртăм вăйĕпе кирлĕ пек усă курмаççĕ. Лашасем япăх тесе, тракторсемпе пырса сухалассă кĕтсе лараççĕ.

Калинино районĕ майăн 10-мĕшĕ тĕлне пурĕ 5.163 гектар сухаласа 5.000 гектар ытларах акнă. Паллах, ку вăл çураки ĕçĕ çителĕксĕр хăвăртлăхпа пынине пĕлтерет. Партипе советăн районри организацийĕсен çураки ĕçне кĕске срокра, пысăк пахалăхпа вĕçлеме мĕнпур колхозниксене мобилизацилемелле

Х. ЛИСИН.

Тракторсем аван ĕçлеççĕ

ВĂРНАР. майăн 12-мĕшĕ. (**Телефонпа**). «11 лет Чувашии» колхозра Алексеев юлташ ертсе пыракан тракторсен бригади ĕçлет. Çак бригада трактăрпа тырă акас ĕçе ăнăçлă туса пырать. Ĕнер çав бригадăри трактористка У. Порфирьева юлташ СТЗ маркăллă трактор çумне лашапа ĕçлекен 11 ретлĕ виçĕ сеялка кăкарса ĕçлесе 15 гектар вырăнне 35 гектар акнă, çапла вара сменăри нормăна 207 процент тултарнă. Ĕçĕн пахалăхĕ те аван. «Комсомолец» колхозра та «У—2» маркăллă трактор çумне лашапа ĕçлемелли 11 ретлĕ икĕ сеялка кăкарса ĕçлесе, сменăра 20-шер гектар акаççĕ. 6-мĕш бригадăра Семенова трактористка кулленхи нормăна 200 процент тултарса ĕçлет. Плана срокчен тултарнăшăн ăна 15 ĕç кунĕ хушса тӳленĕ.

Ĕнер «Волга» колхоз тĕштырăсене акса пĕтерчĕ. Халĕ кунта çĕрулми тата техникăллă культурăсем акмалли çĕр лаптăкĕсене сухалаççĕ, кĕрхи калчасене тепĕр хут апат параççĕ. Колхоз тĕштырăсене пĕтĕмпех сеялкăпа акнă, вăрлăхсене яровизацилесе [illegible] чӳхенĕ.

Районĕпе паянхи кун тĕлне 3.697 гектар тĕштырă тата пăрçа йышши тырăсем акнă.

Агроном И. ДАНИЛОВ.

* * *

ЕЛЧĔК, майăн 12-мĕшĕ. (**Телефонпа**). Трактористсенчен нумайĕшĕсем сменăри нормăсене тултарса ĕçлеççĕ. Н. Порфирьев трактористăн çураки вăхăтĕнче 90 гектар сухаламалла. Паянхи куна вăл 110 гектар сухалана, Ахватуллинăпа Константинова трактористкăсем çураки вăхăтĕнче тумалли ĕçсен планне 110-шар процент пурнăçланă.

Тракторсен 8-мĕш бригади (бригадирĕ Марков юлташ) ĕнерхи кун тĕлне плана 75 процент тултарнă. МТС пĕтĕмĕшпе майăн 10-мĕшĕ тĕлне çураки ĕçĕсен планне 41 процент ытла пурнăçланă.

* * *

ТĂВАЙ, майăн 12-мĕшĕ. (**Телефонпа**). МТС тракторĕсем паянхи кун тĕлне 1.244 гектар сухалана, çураки вăхăтĕнчи плана 36 процент пурнăçланă. Коммунист Егоров юлташ ертсе пыракан бригада малта пырать. Вăл хăйĕн планне 60 процент ытла тултарнă.

Совет Союзĕн, Великобританин тата Пĕрлешӳллĕ Штатсен правительствисем гитлерла Германипе пĕр каварлă государствăсене—Венгрие, Румыние, Болгарие тата Финляндие пĕлтерни

Хăйсен руководителĕсен тăрлавсăр политикине пула, Венгри халăхĕсем Германи оккупацийĕн йывăр пусмăрлăхне тӳсеççĕ, Румыни халĕ те хăйĕн халăхне аркану кӳрекен нацистсемпе пĕрле вăрçать. Болгари тата Финлянди правительствисем хăйсен çĕршывне Германие пулăшас ĕçе пăхăнтарнă тата вăрçăра Германи енче тăраççĕ.

Совет Союзĕн, Великобританин тата Пĕрлешӳллĕ Штатсен правительствисем, çав халăхсем ăнланса илччĕр тесе, çакна пĕлтерме кирлĕ тесе шутлаççĕ:

1. Тĕнĕлти государствăсемпе пĕр каварлисем — Венгри, Румыни, Болгари тата Финлянди, вĕсем хăйсем нацистсем татăклăнах поражени тӳсессине ăнланса илеççĕ пулин те тата хăйсем вăрçăран тухма тăрăшаççĕ пулин те, хăйсен халăхи вăхăтри политикипе тата позицийĕпе Германин вăрçă машинин вăйне пăлармаллах çирĕплетеççĕ.

2. Асăннă государствăсем халĕ те вăрçăран тухса тата Германипе туслă пулассине пĕтерсе, май пур таранах пĕтĕм вăйсемпе нацистсене хирĕç тăрса, Европăри кĕрешĕвĕн срокне кĕскетме, хăйсен пулас çухатăвĕсене чакарма, çапла вара союзниксене çĕнтерӳ тума пулăшма пултараççĕ.

3. Асăннă государствăсем хальхи вăхăтра та хăйсем вăрçăра нацистла Германи енче пулнишĕн ответлăхран хăтăлма пултараймаççĕ пулсан, вĕсем вăрçăра Германипе пĕрле мĕн чухлĕ нумайрах пулĕç, вĕсемшĕн вăрçă хыççăн çавăн чухлĕ йывăртарах пулĕ, унтан та ытларах, вĕсен умне лартакан условисем татах та йывăртарах пулĕç.

4. Çавăнпа та асăннă государствăсен халех çакна татса памалла: вĕсем хăйсен шанчăксăр та тăрлавсăр политикипе, союзниксем çĕнтерес ĕçе чăрмантаракан шанчăксăр та пĕтсе лармалли политикăна малашне те çирĕппĕн пăхăнма шутлаççĕ-и? Вĕсемшĕн халь союзниксем çĕнтерне çĕре хăйсен вăйне хума вăхăт çур-ха.

Ют çĕршывсенче

Хĕрлĕ Çарăн наступлени искусствин чаплă çĕнтерĕвĕ

Совет çарĕсем Севастополе илни çинчен ют çĕршыв хаçачĕсем мĕн çыраççĕ

ЛОНДОН, майăн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Акăлчан хаçачĕсем Севастополе ирĕке кăларни çинчен пĕлтерекен хыпарсене пурте пĕрремĕш страницăра пысăк заголовоксемпе пичетлесе кăларнă. «Дейли экспресс» ятлă хаçат хăйĕн умстатьинче çапла çырать: Севастополь чапне вăрçă историйĕн мухтав кĕнекине çырса хунă», — тет.

«Ньюс кроникл» хаçат Севастополе илни çинчен редакци çырнă статьяра çапла калать: Ку çĕнтерӳ малалла питех те пысăк ĕçсем тума пулăшĕ. Вăл Германи Хĕвелтухăç фронтĕнче тăрмашни пĕтĕмпех путланса ларнине кăтартса парать», — тет.

«Дейли геральд» хаçат çапла çырать: Севастополь крепоçне тытса илнĕ Хĕрлĕ Çарăн техника искусствин чаплă çĕнтерĕвĕ пулса тăрать, тет.

«Ивнинг стандарт» хаçат çапла çырать: «Тĕнчери чи вăйлă крепость—Севастополь — вырăссен штурмне тытса чарайман пулсассăн, мĕнле майпа чăтса тăма пултарĕç-ха нимĕçсен Хĕвеланăç Европăри унтан чылай вăйсăртарах оборона сооруженийĕсем? Севастополе тытса илни акă мĕне кăтартса парать: кирлĕ пек хатĕрленсен тата тавçăруллă та пуçаруллă пулсан, темле хăватлă крепоçа та унти хаяр гарнизонĕ-мĕнĕпех тытса илме пулать, тытса илме пултарайман крепоçсем нимĕçсен пулма пултараймаççĕ. Союзниксен ытти пунктсенчи çарĕсен салтакĕсемшĕн çакăнтан савăнăçлăрах ырă хыпар пулма та пултараймасть!» — тет.

НЬЮ-ЙОРК, майăн 10-мĕшĕ. (ТАСС). «Сан» хаçат хăйĕн умстатьинче Севастополе ирĕке кăларни çинчен питĕ хавасланса, саламласа çырать. Севастополе илни — питĕ пысăк çĕнтерӳ. Ку çĕнтерӳ пĕрлешӳллĕ нацисене пурне те пĕрле пысăк ĕçсем тума пулăшĕ, тет.

ОТТАВА, майăн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Канадăри радиостанци паян каçхине Севастополе илни çинчен Сталин юлташăн приказне панă. Канадăри радион пĕр комментаторĕ Севастополе илни çинчен халăха радио тăрăх çапла ăнлантарса панă: «Крыма тата Севастополе Хĕрлĕ Çар çинчен çĕм пек хăварт туртса илни — ĕмĕрсенчи вăрçă ĕçĕсенчен чи чаплисен пулса тăрать». — тенĕ.

Италири вăрçă ĕçĕсем

Союзниксен çарĕсем наступление куçнă

ЛОНДОН, майăн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Алжирти «Франо» радио паян кăнтăрла союзниксен Италири çарĕсен главнокомандующин Александер генералĕн штабĕ çакăн пек коммюнике кăларни çинчен пĕлтернĕ:

«Союзниксен Италири çарĕсене хальхи вăхăт тĕлне ăнăçлăн вырнаçтарса тухнă. Тăшман чăрмавсем тăвайман. Операцисем тăвас ĕçе сывлăшран пĕр вĕçĕмсĕр тапăнса тăнипе тата фронтăн пĕтĕм тăршшĕнче патрульсем шыраса çӳренипе хӳтĕлесе тăнă. Войскăсемпе техникăсене чугун çулсем тата шоссесем тăрăх массăллăн куçарассипе ăнăçлăн пурнăçа кĕртнĕ. Çанталăк начар тăнине тата вырăнсем начар пулнине пăхмасăрах, войскăсене куçарса вырнаçтарассине палăртнă срокра вĕçленĕ. Генерал Александер ертсе пынипе 5-мĕшпе 8-мĕш çарсем, Вăтаçĕр тинĕсĕ сывăхĕнчен сывлăш-çар вăйĕсем пулăшса пынипе, майăн 11-мĕшĕнче, 23 сехетре, Густава текен çирĕплетнĕ линие хирĕç наступлени пуçарса янă»

ОБЩИНăСЕН ПАЛАТИНЧЕ ЧЕРЧИЛЛЬ ТУХСА КАЛАНИ

ЛОНДОН, майăн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Англин премьер-министрĕ Черчилль паян общинăсен палатинче Великобританипе Британи империйĕ Совет Союзне мĕн чухлĕ пулăшни çинчен тĕплĕн каланă.

Черчилль çапла каланă: «1941 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа 1944 çулхи мартăн 31-мĕшне çитиччен Эпир Совет Союзне 5.031 танк ятăмăр, вĕсенчен 1.233-шĕ—Канада танкĕсем. Эпир Совет Союзне 6.778 самолет ятăмăр, çав шутран 2.672 самолетне Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем янă. Çав самолетсене Пĕрлешӳллĕ Штатсем хĕçпăшала кивсен е аренда йĕркипе памалли закон тăрăх панă, вĕсене Пĕрлешӳллĕ Штатсем хăйсен Европăри хĕçпăшаллă вăйĕсене Англи парса тăнă самолетсем вырăнне Англие ямалли самолетсен шутне кĕртсе панă. Эпир тата тĕрлĕрен чĕртавар, апат-çимĕç, промышленность оборудованийĕ, медикаментсем тата куллен кирлĕ таварсем — пĕтĕмпе 80 миллион кĕренке ытла стерлинглăх панă. Çак таварсен чылай пысăк пайне Российăна Арктикăри çулсемпе янă, вĕсене митрополири флотăн главнокомандующийĕ пĕтĕмĕшле ертсе пынă. Çул çинче çапăçма тивнĕ, çавăн чухне пĕтнĕ çар карапĕсем пурте тенĕ пекех Британин тинĕс-çар флотĕнчи карапсем. Суту-илӳ суднисене илсен, вĕсем Пĕрлешӳллĕ Штатсен пирĕннинчен нумай ытларах пĕтнĕ».

Нумай ыйтусем çине ответлесе, Черчилль çапла каланă: турттарса кайнă чухне пĕтнисем эпĕ кăтартнă цифрăсене кĕмеççĕ-и тен, анчах эпĕ ку ыйтăва тĕплĕ пăхса тухатăп. Эпир панă таварсем вырăнне Российăран «илме пултарнине пурне те илнĕ», анчах та портсенче ĕç ытла нумай пулнă пирки, «вырăссем пама хатĕр пулнă» йывăççене ытларах илсе килме май пулман.

ШТЕТТИН ХУЛИНЧИ ХУМХАНУСЕМ

СТОКГОЛЬМ, майăн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Шведсен «Афтонтидниинген» ятлă хаçачĕ пĕлтернĕ тăрăх, майăн 4-мĕшĕнче Штеттин хулинче (Германи) пысăк хумханусем пулса иртнĕ. 20 магазина аркатса тăкнă. Вырăнти халăх хумханăвне вăрттăн ĕçлекен организаци йĕркеленĕ пуль тесе шутлаççĕ.

ГЕТЕБОРГ ПОРТĔНЧИ РАБОЧИСЕМ ГЕРМАНИЕ ШАРИКОПОДШИПНИКСЕМ ЯНИНЕ ХИРĔÇ ТĂРАÇÇĔ

ГЕТЕБОРГ, майăн 9-мĕшĕ. (ТАСС). «Нью Тид» ятлă хаçат çапла пĕлтерет: майăн 1-мĕшĕнче Гетеборг портĕнчи рабочисен профсоюз пухăвĕнче (вăл профсоюз чи пысăк профсоюз пулса тăрать) пурте пĕр шухăшлă пулса резолюци йышăннă. Резолюцире çапла каланă: «Союзлă державăсем фашизма хирĕç ирĕклĕхшĕн пĕтĕм вăя хурса кĕрешеççĕ. Нейтралитет тытакан Швецин демократин ирсĕр тăшманне — Германие пулăшмалла мар, унта шарикоподшипниксем ямалла мар. Швецин союзниксене пĕтĕм этемлĕх ирĕклĕхĕшĕн пыракан кĕрешӳре пулăшмалла».

АНГЛИ АВИАЦИЙĔН ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, майăн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Англин авиаци министерстви çапла пĕлтерет: майăн 11-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсен шутăра соединенийĕсем Францире Бельгири сортировка станцийĕсене, çавăн пекех тата Францири çыранĕсенчи чылай объектсене тапăннă. «Москито» йышши самолетсем Германири Людвигсхафен хулине тапăннă.

Ответлă редакторăн заместителĕ **А. А. ЭСХЕЛЬ**

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Ялхуçалăхĕнче малта пыракансене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăласси çинчен

(Малалли. Пуçламăшĕ «Чăваш Коммунин» 85-мĕшпе 92-мĕш номерĕсенче).

ВĂРНАР РАЙОНĔ ТĂРĂХ

50. Арсентий Никитич **Смычкова** — СССР Хатĕрлев Халăх Комиссариачĕн Вăрнар районĕнчи уполномоченнăйĕн агентне.

51. Терентий Иванович **Сулукова** — «1-ое мая» колхозри трактор бригадин бригадирне.

52. Анна Владимировна **Шашкована**— Хурăнсурти Чапаев ячĕпе тăракан колхозри колхозницăна

53. Вера Николаевна **Юсевăна**—Молотов ячĕпе тăракан колхозри колхозницăна.

54. Василий Михеевич **Шимина** — Кольцовкăри Ленин орденлĕ, Сталин ячĕпе тăракан колхозри конюха.

ЙĔПРЕÇ РАЙОНĔ ТĂРĂХ

1. Иван Алексеевич **Алексеева** — ĕçсынни депутачĕсен райсовет исполкомĕн председательне

2. Евграф Егорович **Егорова** — районри прокурора.

3. Александр Ефремович **Ефремова**— «Красный партизан» колхозăн председательне.

4. Геннадий Иванович **Иванова** — машинно-тракторнăй станцин директорне.

5. София Ивановна **Картышевăна** — «Победа» колхозăн сурăх пăхаканне.

6. Филипп Архипович **Тарасова** — «Правда» колхозăн овощеводне.

7. Михаил Филиппович **Филиппова**— «Тымар» колхозăн председательне.

ИШЛЕЙ РАЙОНĔ ТĂРĂХ

1. Нина Корниловна **Андреевăна** — машинно-тракторнăй станцинчи трактористкăна.

2. Филипп Степанович **Бусова** — «Акара» колхозăн председательне.

3. Вера Варламовна **Варламовăна** — Калинин ячĕпе тăракан колхозăн старши конюхне.

4. Анастасия Герасимовна **Вастрюковăна**—машинно-тракторнăй станцинчи трактор бригадин бригадир помощникне.

5. Ирина Семеновна **Волковăна** — машинно-тракторнăй станцин трактористкине.

6. Михаил Алексеевич **Денисова** — «Красные Яуши» колхозăн бригадирне.

7. Николай Иванович **Елахова** — машинно-тракторнăй станцинчи трактор бригадин бригадирне.

8. Клавдия Ефимовна **Ефимовăна** — машинно-тракторнăй станцин трактористкине.

9. Семен Порфирьевич **Ильина** — «11 лет Чувашии» колхозăн председательне.

10. Николай Кириллович **Кириллова**— машинно-тракторнăй станцин старши механикне.

11. Георгий Сергеевич **Кочергова** — «Клевер» колхозăн председательне.

12. Сергей Георгиевич **Куликова** — машинно-тракторнăй станцин слесарьне.

13. Кирилл Федорович **Мочалова** — «Социализм» колхозăн колхозникне

14. Мария Николаевна **Николаевăна**— Калинин ячĕпе тăракан колхозăн кладовщикне.

15. Андрей Павлович **Олангина** — «Красный танк» колхозăн председательне.

16. Николай Никитич **Пайманова** — «Большевик» колхозăн старши конюхне.

(Малалли пулать).

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редактора́н — 0—67, заместительпе секретарьăн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31. издательство конторин —3—23.

НТ 00613 Типография №1. Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. б 59Х42 п. л. Тираж 14.400 экз.